**Эвакуаци!**

– Тревога! – шартах вăранать хĕр ача.
Вут пек пĕçерет кĕлетки.
– Лăплан-ха, – тет амăш, –
ку тĕлĕк анчах,
Юмах аташтарнă пекки.

– Анне, хăвăртрах аяла, путвала!
Илтместĕн-им, бомба ӳкет!
– Ачам, пĕчĕкскерĕм, ан çуйăх ытла,
Çук бомба кунта, шеремет.

– Ăçта пирĕн Вовка? Нинук ма тăман?
– Эй-яй, пĕчĕкçеç айванкка,
Халь тек кирлĕ мар вĕсене вăратма,
Вĕсем кайрĕç пит аякка.

Вĕсем халь çӳреççĕ çӳлти пĕлĕтре,
Хитре сад пахчи хӳттинче.
– Мĕнле сад пахчи вал? Курасчĕ пĕрре...
– Пĕлместĕн çав: аслă тĕнче.

– Унта çăкăр пур-и? Кала-ха тата:
Унта сивĕ мар-и, анне?
– Унта çын выçмасть. Хĕл те çуккă унта.
Пит лайăх унта çынсене.

– Аннеçĕм, атя-ха эпир те каяр!
Паян пулмасан та... ыран.
– Тен, кайăпăр та-и... Анчах халех мар –
Аçу таврăнсан вăрçăран.

...Тулта тем юрлать, тем юрлать çил-тăман,
Темскер калаçать тĕнчепе.
Ача çак çула пĕр нушасăр тухман,
Çыврат, çил-тăман, çак чĕппе.

Çыврах, Ленинград хĕр ачи, паппа ту.
Енен: чăваш килĕн ăшши
Сунать сана тăнăçлăхпа юрату,
Сунать сана хăтлă çĕршыв.

*Айташ, Ю. Эвакуаци! / Ю. Айташ // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 402.*